# Сунар хуҫалăхĕсен тĕллевĕсем пурнăҫа кĕреҫҫĕ

***«Хыпар» ыйтăвĕсене ЧР ҫут ҫанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн заместителĕ Владимир Николаевич КУЗЮКОВ хуравлать.***

**– Министерство кăҫалхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче иртнĕ ҫулсенчи пекех кашни кайăкҫă пăшалпа, йытăпа кĕрсе ҫӳреме пултаракан, патшалăх арендаторсене тара панă угодисенчи тата ҫут ҫанталăкăн федераци тата республика шайĕнчи уйрăмах сыхлакан лаптăкĕсенчи /ҪҪУСЛ/ сунар пуянлăхне – сĕтпе тăрантаракан чĕрчунсемпе вĕҫен кайăксене – шутлаттарчĕ. Ку ĕҫ пĕтĕмлетĕвĕ ҫинчен паянччен хыпар пулмарĕ. Хаҫат тусĕсене мĕн пĕлтеретĕр?**

– Министерствăн чĕрчун тĕнчипе ҫут ҫанталăкăн уйрăмах сыхлакан лаптăкĕсене сыхлас, вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе ĕҫлекен дирекци инспекторĕсем, федераци шайĕнчи ҪҪУСЛсен сотрудникĕсем, сунарҫăсем пăши – 1035, хир сысни – 1278, хир качаки – 286, кашкăр – 19, пакша – 4900, тилĕ – 1670, сăсар – 920, шурă мулкач – 4530, хир мулкачĕ – 2330, карăк – 1140, ăсан – 34000, пăчăр – 7070, сăрă хир чăххи 16888 шута илнĕ.

**– Чылай тĕс йыша ӳстерни мана чăннипех те тĕлĕнтерчĕ. 2015 ҫулхи пĕтĕмлетӳсем министерство сайтĕнче ҫуккине шута илсе эсир редакцие ярса панă цифрăсене 2014 ҫулхипе танлаштартăм. Хĕллехи шутлавра пăши – 791, хир сысни – 1302, хир качаки – 85, пакша – 2269, тилĕ – 1724, сăсар – 612, шурă мулкач – 3569, хир мулкачĕ – 1337, ăсан – 10264, карăк – 785, пăчăр – 4607, сăрă хир чăххи 4977 пулнă.**

**Хир качаки 3,3 хут хушăннинчен тĕлĕнсе ĕҫ пӳлĕмĕнчи хыҫлă пукан ҫине лап! лартăм. Ҫавăн чухлĕ совет тапхăрĕнче те ĕрчемен. Пăши – 23,6%, пакша – 53,7%, сăсар – 33,5%, шурă мулкач – 21,3%, хир мулкачĕ – 42,8%, ăсан – 69,8%, пăчăр – 34,8%, сăрă хир чăххи 70,6% хушăннă! Чĕрчун тĕнчин тусĕсем кун пек ӳсĕм ҫинчен тахҫантанпах пĕлмеҫҫĕ. Сăлтавне ăнлантарса памăр-и?**

– Пĕлтĕр ҫанталăк чĕрчунсене ĕрчеме пулăшса ҫеҫ пычĕ. Дирекци инспекторĕсем, сунар угодийĕсене тара илнĕ хуҫалăхсем вĕсене хĕлĕпех апатлантарчĕҫ – сивĕсенче выҫăпа аптрамарĕҫ, вăйсăрланмарĕҫ. Сунар объекчĕн ытти тĕсĕн шучĕ пĕлтĕрхи чухлех.

**– Кăҫал пĕр сунар лаптăкне те пулин арендаторсене нумай ҫула тара панă-и?**

– Хальлĕхе паман. Министерство тăватташне ҫирĕплетсе пама пăхнă. Ку ыйтупа кăҫалхи ҫурла уйăхĕн 31 тата авăн уйăхĕн 7-мĕшĕсенче аукционсем иртĕҫ. Паянхи кун тĕлне республикăра тара панă сунар лаптăкĕ – 37. Вĕсем пурĕ 1035,853 пин гектар е пĕтĕм сунар угодийĕн 65 процентне йышăнаҫҫĕ.

**– Вĕсемсĕр пуҫне кашни сунарҫа ухатара ҫӳреме май паракан территори мĕн чухлĕ?**

– 31 лаптăк е 560,5 пин гектар.

**– Министерство тата нумай ҫула тара илнĕ лаптăксен хуҫисем пĕр-пĕрин тивĕҫĕсемпе тĕллевĕсене килĕшӳре ҫирĕплетнине, арендаторсем чĕрчунсене ĕрчетме шантарнине пĕлетĕп. Вĕсен ĕҫ кăтартăвĕ мĕнле?**

– Сунар угодийĕсемпе чĕрĕлĕхе хуралламалла инспекторсен штатне турĕҫ. Хир сыснисене хĕлле ҫитерме вăрмана апат турттарчĕҫ, чĕрчунсене шутларĕҫ. Ҫуркунне чĕрнеллĕ чĕрчунсемпе мулкачсем валли чăтлăхра тĕлĕ-тĕлĕпе суланча хучĕҫ, сунар ресурсĕ шутланакан кайăксем валли йăвасем /галечник/ ҫакрĕҫ, министерство инспекторĕсемпе пĕрле сунар пуянлăхне сыхларĕҫ.

**– Сунарҫăсем ăҫта канма пултараҫҫĕ?**

– Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхозăн сунар хуҫалăхĕ аван. Унти вольерте республикăра чи малтан паха пăлан /олень благородный/ ĕрчетме тытăннă. Амине – 6, аҫине 1 илсе килнĕ. Пĕлтĕр 5 пăру ҫитĕннĕ. Пăлан ĕнисем кăҫал та пăруланă. Республикăри сунарҫăсемпе пулăҫсен сунар хуҫалăхĕн «Кожевенное», «Калиновка», «Лебединский», «Козий остров» хуҫалăхĕсем акарҫăсене сунар йĕркелеме тата канма май туса параҫҫĕ. Сунар лаптăкне тара илнĕ ытти арендатор та вĕсене килти пек йышăнма тĕллев лартнă. Паянхи пурнăҫпа килĕшсе тăракан хăна ҫурчĕсем тăвасшăн. Вĕсен ĕмĕчĕ ҫитессе шанас килет.

**– Хуҫалăхсен штатĕнче миҫе ҫын? Кашни уйăхри шалăвĕ мĕн чухлĕ?**

– Вĕсене реестра кĕртнĕ информаци тăрăх 63-ĕн – ертӳҫĕ, охотовед, егерь, ытти специалист – вăй хураҫҫĕ. Чылайăшĕн ĕҫ укҫи пысăк мар. Ҫапах та хăшĕ-пĕринче кашни уйăхра 15-шер пин тенкĕ илеҫҫĕ.

**– Хуҫалăхсем, сунарҫăсем укҫа куҫарса хыснана еплерех пуянлатаҫҫĕ?**

– Пĕлтĕр кашни акарҫă пăшалпа, йытăпа кĕрсе сунар ирттерме пултаракан лаптăксенче чĕрчун тытма ирĕк 9613 хутчен панă, кайăкҫăсем уншăн патшалăх пошлини 6248 пин тенкĕ тӳленĕ. Кăҫалхи ҫур ҫулта ирĕк 2465 хутчен илнĕшĕн 1602 пин тенкĕ хывнă.

**– Ку укҫа нумай мар-иҫ. Пошлина ытларах тӳлеттерме сĕнес килет. Чĕрчун тĕнчи тĕлĕшпе министерство хăйĕн умне мĕнле тĕллевсем лартать?**

– Тара пама плана кĕртнĕ сунар лаптăкĕсене аукционсем ирттерсе ҫирĕплетесси, сунар пуянлăхне лайăхрах хӳтĕлесси, сунар ресурсĕ шутланакан чĕрчунсен йышне ӳстересси, акарҫăсен ытларах пайне сунара ҫӳреме май туса парасси.



**– Республикăра чĕрчун тĕнчин миҫе сунар объекчĕ?**

– Иртнĕ ҫул 82 тĕсчĕ, кăҫал та ҫавăн чухлех.

**– ҪҪУСЛ миҫе?**

– Республика тата вырăнти муниципалитет шайĕнчи – 29-шар. Федерацин – 2: «Сăрҫум» заповедник /Улатăр, Патăрьел, Елчĕк/ тата «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕ /Шăмăршă/. Регион пĕлтерĕшлисене дирекци инспекторĕсем хӳтĕлеҫҫĕ. Лаптăксенче ҫут ҫанталăк пуянлăхне, вăл шутра чĕрчунсене хӳтĕлесси ҫинчен калакан саккунсене пăхăнаҫҫĕ.

**– Министерство пуҫарнипе кăҫалхи ака уйăхĕнче республика шайĕнчи ҪҪУСЛсем тăвас ыйтăва сӳтсе яврĕҫ. Тĕлпулăва хутшăннă тĕпчевҫĕсем ҫĕнĕрен йĕркелеме сĕнчĕҫ. Унтанпа 4 уйăх иртрĕ – ҫĕнĕлĕх пур-и?**

– Министерство ҫу уйăхĕнче ҪҪУСЛсен концепцине хатĕрлес тĕлĕшпе ĕҫлеме комисси турĕ. Ку йыша министерствăн должноҫри ҫыннисене, унăн ҫумĕнчи Общество канашĕн членĕсене, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн, «Сăрҫум», Чăваш наци музейĕн, Раҫҫей Академи Наукисен ботаникăн тĕп сачĕн Шупашкарти филиалĕн сотрудникĕсене кĕртнĕ. Комиссин сĕртме уйăхĕнчи ларăвĕнче республика тата район-хула шайĕнчи ҪҪУСЛсене мĕнле пăхса йĕркелемеллине тишкертĕмĕр. Патшалăх сыхламан вăл е ку лаптăка хӳтĕлĕхе илесси ҫинчен йышăну кăлариччен пĕрлехи экологи тĕпчевĕ ирттермелле. Бюджет укҫине перекетлес тĕллевпе кăҫал регион шайĕнче темиҫе кластер вырăнĕллĕ ҪҪУСЛ иккĕрен сахал мар йĕркелеме шухăшлатпăр.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
**калаҫнă**